26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАРТ 5 ЭРНЕКУН 51(6288) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

I. Пирĕн войскăсем РЖЕВ хулине йышăнса илнĕ

Темиçе кун хаярлă пирĕн войскăсем РЖЕВ хулине татăклăн штурмлама тытăннă. Хулана тата хула патне пымалли вырăнсене нимĕçсем тахçанах ĕнтĕ вăйлăн тĕреклетнĕ район туса хунă. Паян, мартăн 3-мĕшĕнче, нумай вăхăт хушши тата хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн войскăсем РЖЕВ хулине йышăннă.

Туллимар даннăйĕсем тăрăх, çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксем—112, тĕрлĕ калибрлă орудисем — 78, паровозсем — 35, вагонсем — 1.200, тĕрлĕ складсем — 5, çавăн пекех тата снарядсем, минăсем, пулеметсем, винтовкăсем тата ытти çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

Хула патне пымалли вырăнсенче тата РЖЕВРА хăйĕнче противникăн 2.000 ытла салтакĕпе офицерĕ вилсе юлнă.

Хулана чи малтан генерал-майор А. Ф. КУПРИЯНОВ юлташăн, генерал-майор Н. Н. ОЛЕШЕВ юлташăн тата полковник В. П. ШУЛЬГА юлташăн чăçĕсем кĕрсе кайнă.

II. Пирĕн войскăсем ЛЬГОВ тата ДМИТРИЕВ-ЛЬГОВСКИЙ хулисене йышăнса илнĕ

Пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн ЛЬГОВ хулипе чугунçул узелне йышăнса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсем шутне снарядсем тиенĕ 148 вагон, тар тиенĕ 22 вагон, боеприпассен 3 склачĕ, снарядсен пысăк куписем, инженерла пурлăхсен 2 склачĕ пур. Татăклăн атакăланă хыççăн пирĕн войскăсем ДМИТРИЕВ-ЛЬГОВСКИЙ хулине йышăнса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсене шута илесçĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем ОЛЕНИНО, СЕВСК, СУДЖА хулисене, ЧЕРТОЛИНО станцине йышăнса илнĕ

1). Мартăн 4-мĕшĕнче Ржевран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, малалла наступлени туса пырса, ОЛЕНИНО хулипе чугунçул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех ЧЕРТОЛИНО ятлă пысăк чугунçул станцине йышăнса илнĕ. Мускав—Ржев — Великие Луки чугунçулне тăшманран пĕтĕмпех тасатнă.

2). Орел облаçĕнче пирĕн войскăсем, вăйлă çапăçу хыççăн, СЕВСК хулине йышăнса илнĕ.

3). Курск облаçĕнче пирĕн войскăсем, татăклăн атакăланă хыççăн, СУДЖА хулипе чугунçул станцине тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Финанс планне срокчен тултарассишĕн!

Тăшмана Совет çĕршывĕнчен часрах хăваласа кăларас ĕç пуçланнă. Сталин юлташ тăшман войскисене пырса çапассине татах вăйлатма, тăшмана ывăнма пĕлмесĕр тата çине тăрса хăваласа пыма приказ панă. Çулпуçăн историллĕ приказне пурнăçласа пырса, геройла Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем фашистла нимĕç захватчикĕсене кунсерен çине-çинех пыра-пыра çапаççĕ.

Анчах нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ халĕ çес çаралса тата хĕрÿленсе пырать-ха. «Хĕрлĕ Çарăн малашне те татах та тискер, хаяр, вăйлă тăшмана хирĕç хаяр кĕрешÿ туса пымалла пулать». (Сталин). Çав кĕрешÿре ăнăçăлăхне пĕтĕм хамăр мĕнпур вăй, хамăрăн мĕнпур материал мехтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшма мобилизацилени татса парать.

Çакна таранăн туйса тăрса, республика ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те çителĕклĕ парса тăрассишĕн кĕрешеççĕ. Хĕрлĕ Çара хĕçпăшал, тырпул, апат-çимĕç парса тăнипе пĕрлех, вĕсем государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене те вăхăтра парса татма тăрăшаççĕ. Шупашкар, Красноармейски, Шăхасан, Советски, Сĕнтĕр тата Ишлей районĕсем Хĕрлĕ Çар кунне тĕлне пĕрремĕш кварталти финанс планне ăнăçлăн пурнăçларĕç. Шупашкар районĕ (райфо заведующийĕ Алексеев) укçа-тенкĕ пухмалли 1-мĕш квартал планне мартăн 1-мĕшĕ тĕлне 144,9 процент тултарчĕ, Красноармейски район—134,2 процент, Шăхасан районĕ—130,4 процент пурнăçларĕç.

Финанс планне пурнăçлас енĕпе республикăра малта пыракан районсем финанс работникĕсен социализмлă ăмăртăвне анлăн сарса ячĕç. Районсенчи финанс пайĕсемпе перекет кассисенче ĕçлекенсем, финанс агенчĕсем ĕççыннисемпе таччăн çыхăнса ĕçлерĕç. Вĕсем Сталин юлташăн историллĕ доклачĕсемпе приказĕсене ĕççыннисене тимлĕн ăнлантарса парса, вĕсене государство умĕнчи хăйсен парăмĕсене вăхăтра парса татма мобилизацилерĕç.

Тăвай, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Элĕк районĕсенчи, Çĕмĕрлепе Канаш тата Улатăр хулисенчи финанс работникĕсем укçа-тенкĕ мобилизацилес ĕçре малта пыракансен опычĕпе, ĕççыннисен патриотизмлă тата политикăллă çĕкленĕвĕпе усă курма пĕлмеççĕ. Çавна пула Тăвайпа Хĕрлĕ Чутай районĕсем пĕрремĕш кварталти финанс планне мартăн 1-мĕшĕ тĕлне 45 процент е кăшт ытларах çеç тултарчĕç, Çĕмĕрле районĕ—53 процент, Пăрачкав районĕ—59,4 процент çеç пурнăçланă.

Пĕрремĕш кварталăн юлашки уйăхне—март уйăхне кĕтĕмĕр. Март уйăхĕ финанс работникĕсемшĕн ответлă уйăх пулса тăрать. Мартăн 1-мĕшĕ тĕлне республика укçа-тенкĕ пухас плана, пĕтĕмĕшле илсен, 81,1 процент тултарчĕ. Укăрмăн илмелли, налог тÿлевĕсем тăрăх плана 83,4 процент, государство страхованийĕ енĕпе —77,7 процент, военнăй налог укçине пухас енĕпе 90,9 процент пурнăçланă. Пĕрремĕш кварталти финанс планне срокчен пурнăçлама пирĕн республикăн майсем те пур. Финанс работникĕсем, уйрăмах юлса пыракан районсенчи финработникĕсем, пĕрремĕш кварталти финанс планне срокчен пурнăçлассишĕн вăйлăн кĕрешмелле.

Финанс планне пурнăçлас ĕçре государство доходĕсен планне тата страховка укçи пухас плана тултарасси ытти тÿлевсенчен чылай юлса пырать. Мартăн 1-мĕшĕ тĕлне республика государство доходĕсен планне 68,9 процент çеç тултарчĕ. Тÿлесе татман пĕтĕрхи парăмсем 920.000 тенкĕ пухăннă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Канаш хули тата Етĕрне Çĕрпÿ районĕсем паларса тăраççĕ. Государство доходĕсем бюджетра пысăк вырăн йышăнса тăнипе, вăл укçа тÿрремĕнех тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетме кайнине пелеççĕ пулин те, Канаш горфинотделĕн заведующийĕ Мефодьев тата Етĕрнепе Çĕрпÿ районĕнчи финанс отделĕсен заведующийĕсем Кочергинапа Панин юлташсем хуçалăх организацийĕсенче тÿлев дисциплинине сÿрĕкленнипе килĕшсе пурăнаççĕ, вăл парăмсене çийĕнчех таттарассишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Çĕрпÿри профшкул (директорĕ Матросов) тата «Перламутр» артель (председателĕ Михайлов) пĕлтĕр бюджета кĕмелли 122 пин тенкĕ укçана халĕ те тавăрса памаççĕ. Райфо заведующийĕ Панин юлташ ку таринччĕнех вĕсене ответ тыттармасăр пурăнать.

Плана ăнăçлăн пурнăçлас ĕçре финанс дисциплинине çирĕппĕн тытса пыни пысăк вăй пулса тăрать. Хăшпĕр райфо заведующийĕсем çакăн çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ. Вĕсем финанс кадрĕсене ÿстерсе воспитани парасси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ-ха. Çак çитменлĕхе халех пĕтермелле.

ЧАССР Наркомфинĕн районсенчи тата хуласенчи финанс органĕсен хисеплĕ задачи — финанс ĕçĕсене лайăхлатасси, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса, пĕрремĕш кварталти финанс планне срокчен пурнăçласси пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 3-мĕшĕнче пирĕн войскăсем нумай вăхăт хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн Ржев хулине тытса илнĕ.

Пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн Льгов хулипе чугунçул узелне тата Дмитриев-Льговский хулине тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннелле наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Мартăн 2-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинăна çитти пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 14 батарейине пусарса лартнă.

* * *

1941 çулхи октябрьте Ржев хулине йышăнса илсен, нимĕçсен фашистла войскисем ăна тата ун патне пымалли вырăнсене вăйлă тĕреклетнĕ район туса хунă. Тăшман, çухатусем нумай тÿснине пăхмасăр, çав хулана нумай уйăх хушши хăйĕн аллинче тытса тăма тăрăшнă. Темиçе кун каялла пирĕн войскăсем, Ржевран кăнтăр-хĕвеланăç енчен тата кăнтăр-хĕвелтухăç енчен иртсе кайса, Ржева татăклăн штурмлама тытăннă, паян вара ăна пĕтĕмпех тытса илнĕ. Ржев патне пымалли вырăнсенче тата Ржев урамĕсенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 2.000 виллине çити шутласа кăларнă. Пирĕн войскăсем 112 танк, 78 оруди, 35 паровоз, 1.200 вагон, 5 склад тата снарядсем, минăсем, пулеметсем, винтовкăсем, тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски часть тăшманпа çапăçса нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 2 оруди, 11 пулемет, 3 миномет тата снарядсемпе минăсем тиенĕ 10 автомашина тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн гвардеец-минометчиксем вăйлăн персе тăрса боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă пехотине сапаласа янă.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă. Н-ски чăсăн боецĕсем çапăçса пырса малалла куçнă та халăх пурăнакан 3 пункта тытса илнĕ. 400 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Нимĕçсен 7 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн танкистсем тăшман пехотин ротине аркатса тăкнă, 4 оруди тата 13 пулемет тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн Льгов хулипе чугунçул узелне тытса илнĕ. Паянхи кун кăна çав хулан урамĕсенче нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсем хушшинче снарядсем тиенĕ 148 вагон тата снарядсен шаршанласа хунă пысăк куписем, тар тиенĕ 22 вагон, боеприпассен 3 склачĕ тата инженерла пурлăх склачĕ пур. Трофейăсене малалла шута илеççĕ.

* * *

Кубань çинче Н-ски соединени юлашки кунсенче пулса иртнĕ çапăçусенче 7 оруди, 9 миномет, 18 станковăй тата зенитнăй пулемет, паровоз, 28 вагон, 5 оруди, 9 пулемет, 138 автомашина тата радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Н-ски часть противникран халăх пурăнакан темиçе пункта тасатнă, çавăн чухне 200 гитлеровеца вĕлернĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем малалла куçнă, трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕ февраль уйăхĕн вĕçĕнче хаяррăн çапăçса нимĕçсен 295-мĕш уйрăм сапернăй батальонне аркатса тăкнă. Тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Тепĕр районра Украинăри партизансем февралĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германирен фронта танксем тиенĕ çар эшелонĕ иртсе каяссине пĕлнĕ. Партизансем чугунçула темиçе тĕлте миналаса хунă. Нимĕçсен эшелонĕ çав минăсем çине пырса кĕнĕ те сирпĕнсе кайса айккинелле йăванса кайнă. Пĕр паровоз тата танксем тиенĕ 25 платформа çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Нимĕçсен 376-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ генерал-лейтенант Александр фон-Даниэль, Сталинград районĕнче тыткăна лекнĕскер, çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи Российăна килнĕ чухне унта 17.000 çын пулнă. Ноябрь уйăхĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче эпир çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тÿсрĕмĕр. Каялла чакнă чухне пĕтĕм артиллерин çуррине яхăн пăрахма тиврĕ. Пире пĕтĕмпех хупăрласа илнĕ чухне дивизире 12.000 çынна яхăнччĕ. Фронтра ĕçсем мĕнле пыни çинчен эпир пĕлмен, пурте ункă тулашĕнчен килсе пулăшасса çеç шанса тăнă. Пире пулăшма пынă Манштейн поражени тÿсни пире хытă кулянтарчĕ. Пирĕн ĕç пĕтĕмпех пĕтсе ларни маншăн январĕн 10-мĕшĕнче вара паллă пулса тăчĕ.

Нимĕç войскисене Сталинграда хĕл пĕтиччен алăра тытса тăма задани панă пулнă. Командованин пур планĕсене те вара çак задачăна шута илсе тунă. Вырăссем наступлени тума пуçласан, çав плансем пурте пăчланса ларчĕç. Нимĕçсен 6-мĕш армине çавăрса илсе пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе туса ирттернĕ операци стратегин чи лайăх тĕслĕхĕ пулса тăрать. Нимĕç войскисем Сталинград патĕнче поражени тÿсни вăрçăн малашнехи кунсуленче вăйлă палăрĕ. 6-мĕш арми пĕтнĕ пирки çынсемпе техника тата çар хатĕрĕсем тĕлĕшпе тÿснĕ питех те пысăк çухатусене сапламашкăн питĕ нумай ĕçлемелле пулать тата вăхăт нумай кирлĕ пулать».

* * *

Нимĕç захватчикĕсем Харьков облаçĕнчи Волчанск хулинче сакăр уйăх хушши хуçаланса пурăннă. Çав вăхăт хушшинче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем мирлĕ пурăнакан çĕршер çынна вĕлернĕ. Гитлерла пуçкасакансем заложниксен пилĕк ушкăнне—мĕнпурĕ 438 çынна персе вĕлернĕ. Кунсăр пуçне вĕсем хулари 100 гражданина ытла асаплантарса вĕлернĕ. Волчанскран тухса каяс умĕн фашистсем педагогика училищине, агротехника шкулне, Шевченко ячĕпе тăракан шкула, Пушкин ячĕпе тăракан шкула, ачасен техника станцине тата ытти обществăллă çуртсене те çунтарса янă.

Мартăн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Мартăн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Пирĕн войскăсем Ржева тытса илнĕ хыççăн çапăçса пырса кăнтăр-хĕвеланăçнелле малалла куçнă. Нимĕçсен пехотипе танкĕсем, пирĕн войскăсене малалла кайма чарас тесе тата оборонăн çĕнĕ рубежĕсенче çирĕпленсе ларас тесе, темиçе хутчен контратака тунă. Гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă. Пирĕн чăçсем халăх пурăнакан 11 пункта тытса илнĕ. Çав пунктсенчен пĕринче кăна артиллерин 2 батарейине, минометсен 2 батарейине, боеприпассен складне тата 200 пичке ытла горючи тытса илнĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре Н-ски чăçăн боецĕсем тăшманăн тĕреклетнĕ позицийĕсене йышăннă, 3 оруди, 2 миномет, 50 винтовка, 6 пулемет тата радиостанци тытса илнĕ. Тепĕр участокра тăшманăн контратакине сирсе янă, çавăн чухне 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски чăçăн подразделенийĕсем халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçура нимĕç пехотин ротине аркатса тăкнă. 3 противотанковăй оруди, 5 пулемет, 2 миномет тата боеприпассен 11 автомашинине тытса илнĕ.

* * *

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенин чăçĕсем нимĕç пехотин контратакине сирсе янă, çав пехотăна 20 танк пулăшса пынă. Çапăçура тăшманăн 10 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата 200 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Льгов районĕнче Н-ски соединенин чăçĕсем наступленилле çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра пирĕн подразделенисем халăх пурăнакан пункта тытса илнĕ. Нимĕçсем контратака туса çав пункта çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Совет боецĕсем гитлеровецсене унта çирĕпленсе ларма памасăр хирĕç пырса çапнă та вĕсене çав пунктран хĕссе кăларнă, унтан, малалла хăваласа пырса, тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кубань çинче пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă, тăшманăн тĕреклетнĕ темиçе пунктне йышăнса илнĕ. Н-ски чăçăн боецĕсем нимĕçсенчен 3 оруди, 14 пулемет, 11 автомашина тата радиостанци тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ февралĕн 18-мĕшĕнче нимĕç гарнизонне сасартăк пырса тапăннă. Çапăçура совет патриочĕсем 90 гитлеровеца вĕлернĕ. Тепĕр отрядри партизансем нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушение пула пĕр паровоз, 2 вагон тата орудисемпе автомашинăсем тиенĕ 5 платформа çĕмĕрĕлнĕ. 17 гитлеровец вилнĕ. 35-шĕ аманнă.

Орел облаçĕнчи партизансен пĕр ушкăнĕ шоссе çулĕ çинче засадăра ларса нимĕç автоколоннине пенĕ. Пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе 40 салтака вĕлернĕ. Партизансем 2 станковăй тата 10 ручной пулемет, 4 автомат, 50 винтовка тытса илнĕ.

* * *

Мартăн 3-мĕшĕнче Берлинри радио çапла пĕлтернĕ: «Импери министрĕ доктор Геббельс Великие Луки хулинчи паттăр гарнизонăн представителĕсене йышăннă, вĕсем Берлина темиçе кунлăха килнĕ. Йышăнура çав çапăçусен участникĕсем крепоçа хула варринче мĕнле хÿтĕлени çинчен каласа панă», тенĕ. Çакă паллă: совет войскисем Великие Луки хулинчи нимĕç гарнизонне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă, унăн юлашкийĕсене хулан коменданчĕпе фон Засс подполковникпа пĕрле тыткăна илнĕ. Великие Луки хулинчи çапса аркатнă гарнизонăн тыткăна лекнĕ салтакĕсемпе офицерĕсем совет лагерĕсенче пурăнаççĕ, çавăнпа вĕсем, паллах ĕнтĕ, çав йышăнура пулма пултарайман. Апла пулсан суя докторĕ Геббельс кама йышăннă пулать-ха? Вилнĕ çынсене мар-ши? Пуçласси çеç кансĕр, унтан вара ĕç каять. Геббельсăн Сталинградри, Чертковăри, Касторнăйри тата нимĕç гарнизонĕсене савăрса илсе пĕтерсе тăкнă ытти нумай пунктсенчи представительсене йышăнмалли çеç юлать.

РЕСПУБЛИКĂРИ ОРГКОМИТЕТРА

Профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне республикăра пĕтĕмпе 124.163 çын хутшăннă

Февралĕн 28-мĕшĕнче профсоюзсемпе комсомолăн Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ йĕлтĕрлĕ кросĕ вĕçленчĕ. Йĕлтĕрлĕ кроса республикăри мĕнпур хуласемпе ялсем активлăн хутшăнчĕç. Республикăри оргкомитета панă сведенисем тăрăх, йĕлтĕрлĕ кроса пĕтĕмпе 124.163 çын хутшăннă, вĕсенчен 16.512 комсомолец. Ăмăртăва хутшăннисенчен 110.922 çын ГТО тата БГТО значокĕсен нормисене панă.

Йĕлтĕрлĕ кроса уйрăмах Хĕрлĕ Чутай, Шупашкар, Чкаловски, Канаш, Çĕмĕрле районĕсенче тата Шупашкар хулинче лайăх хатĕрленсе ирттернĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Кириллов юлташ) йĕлтĕрлĕ ăмăртусене 6.638 çын хутшăннă, вĕсенчен 5.740 çын ГТО тата БГТО значокĕсен нормисене панă, çакă вăл йĕлтĕрлĕ кросс участникĕсен 85 процентĕ пулать. Шупашкар районĕнче йĕлтĕр çине 5.986 çамрăк тăнă, Чкаловски районра кроса 5.252 çын, Канаш районĕнче 5.120 çын тата Шупашкар хулинче 12.255 çын хутшăннă.

Анчах профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне хăшпĕр çĕрте сÿрĕккĕн ирттерчĕç. Улатăр районĕнче кроса пĕтĕмпе те 1.054 çын, Красноармейски районра 2.134 çын, Канаш хулинче 1.980 çын, тата Улатăр хулинче 2.144 çын, çеç хутшăннă.

Кросс вĕçленнĕ пулин те, йĕлтĕр спорчĕ çинчен манмалла мар. Республикăри профсоюз тата комсомол организацийĕсен йĕлтĕр спортне малалла татах аталантарса пымалла.

Республикăри комсомол активĕпе ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен канашлăвĕ уçăлчĕ

Мартăн 4-мĕшĕнче Советсен Çуртĕнче республикăри комсомол активĕпе ялхуçалăхĕнче малта пыракан Çамрăксен канашлăвĕ уçăлчĕ.

Канашлу президиумĕне—ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Белков, Ахазов, ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, ЦК ВКП(б) çумĕнчи парти контроль комиссин Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Серов, ЧАССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ Белолипецкий, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕсем П. Михайлов, Л. Михайлов, Петрухин, Аверьянова, ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташсем, ялхуçалăхĕнче малта пыракан паллă стахановецсемпе стахановкăсем, ялхуçалăх специалисчĕсем.

Канашлу участникĕсем тăвăллăн алă çупса хисеплĕ президиума Сталин юлташ ертсе пыракан ЦК ВКП(б) политбюро составне суйлаççĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ П. Михайлов юлташ колхоз çамрăкĕсен 1943-мĕш ялхуçалăх çумĕнчи задачисем çинчен доклад тума ВКП(б) Обкомĕн секретарьне Белков юлташа сăмах парать.

Канашлу Белков юлташăн докладне пысăк тимлĕхпе итлерĕ.

Доклад хыççăн пренисем пуçланчĕç. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хăйсем туса ирттернĕ ĕçсем çинчен Вăрмар МТС политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ Волков, комсомолăн Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозри пуçламĕш организацин секретарĕ Сибай Галиев, ВЛКСМ Советски райкомĕн секретарĕ Никитин, Етĕрне МТС-ĕн тракторисчĕ Кошкин юлташсем каласа пачĕç.

Çакăнпа канашлун мартăн 4-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕ хупăнчĕ. Канашлу паян, мартăн 5-мĕшĕнче, хăйĕн ĕçне малалла тăсать.

Районри хаçатсенчен

Ултă ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта

Пирĕн Совет çĕршывĕшĕн тата унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Шарпашри (Советски р.) «Искра» колхоз членĕ Семен Васильев, 59 çулхи старик, ырми-канми ĕçлет. Унăн ултă ывăлĕ вăрçă фрончĕсенче фрицсемпе паттăррăн çапăçаççĕ. Васильев ун çинчен çырусем тăрăх пĕлет. Ывăлĕсен çапăçури çитĕнĕвĕсемпе хавхаланса, Васильев юлташ колхозра ĕçлесе фронтовиксене вăйлăн пулăшать. Иртнĕ çулта вăл 200 ĕçкунĕ ытла тунă. Кăçал та çавнашкалах ĕçлет. Кунсăр пуçне, вăл боецсем валли ăшă тумтирсем панă, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен татнă, танксемпе самолетсем тума укçа-тенкĕ чылай панă. («Совет ялавĕ»).

Хĕрлĕ Çар фондне—тырă, сш-какай

Районри колхозсемпе колхозниксем хăйсен перекетлесе хăварнă 1.500 центнер ытла тыррине Хĕрлĕ Çар фондне хыврĕç. Вăл шутран Шĕкерти „1-ое Мая" колхоз—105 центнер, Çавалакассинчи „Çуттал-ла" колхоз—100 центнер, Тури Карачурари „Ленин Çулĕпе" колхоз—55 центнер хыврĕç.

(Калинино, „Коммунизм ялавĕ").

Учет ĕçĕ япăхнă çĕрте

ÇĔРПУ. «Пучах» колхозра ревизи комиссийĕ колхозăн 1942 çулхи ĕçĕсене тишкерсе тухрĕ. Вăл колхозра учет ĕçĕ япăх пулнине палăртрĕ. Çавна пула хăшпĕр çынсем колхоз пурлăхне çаратма тытăннă. Кладовщиксем 18 центнер тырра шута илмесĕр хăварнă, хăшпĕр колхозниксене аванс шучĕпе тырă панине счетсем çине çырман. Завхоз пулса ĕçленĕ М. Ивановăн 17 центнер ытла тыра, 295 тенкĕ укçа тата складри ытти япаласем 3.000 тенкĕлĕх тухманнине палăртнă.

Çĕрулми тăррине нумайрах хатĕрлер

Академик Лысенко çĕрулмисен тăррисем çĕрулми лартса тăвас ĕçе анлăн сарма, çĕрулмине нумайрах туса илме лайăх май туса пани çинчен каласа панă. Академик Лысенко çимĕçе каякан шултăра çĕрулмисен тăррисенчен тухăçлăрах тата лайăхрах çĕрулми ÿссе пулнине наука енчен çирĕплетсе панă. Çакнах совхозсемпе колхозсен пĕлтĕр тунă ĕçĕ те уççăн кăтартать. Иртнĕ çул, çимелли çĕрулмисен тăррисене лартса ÿстерсе, сахал мар колхозсем пысăк тухăçлă çĕрулми туса илчĕç. Çĕмĕрле районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз çимелли çĕрулмисен тăррисене лартнă участокран гектар пуçне 321 центнер çĕрулми туса илнĕ. Çавăн пек участоксем çинчех вăрлăхлăх уйăрса хунă вĕтĕрех çĕрулмисем лартса гектартан 114 центнер сахалрах туса илнĕ. Çавăн пекех, Шупашкарти столовăйсен тресчĕ те çĕрулми тăррисене лартнă участоксенчен 15—20 процент ытларах туса илнĕ тата çĕрулмийĕсем те унта шултăрарах пулнă.

Çакă вăл çимелли çĕрулмисен тăррисемпе усă курас ĕçе анлăрах сарма кирлине кăтартса парать. СССР Совнаркомĕ 1942 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕнче çакăн пирки уйрăм решени йышăннă, облаçсемпе республикăсене çимелли çĕрулми тăррисене вăрлăхлăх касса хăварма задани панă. Чăваш АССР Совнаркомĕ те колхозсемпе совхозсенче, предприятисемпе учрежденисен подсобнăй хуçалăхĕнче тата ытти организацисенче çĕрулми тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлес тĕлĕшпе кăтартусем тахçанах панă. Анчах та хăшпĕр районсенчи руководительсем çĕрулмисен тăррисене вăрлăхлăх касса хатĕрлес ĕçе халĕ те кирлĕ ĕç вырăнне хурса туса пымаççĕ-ха. Чылай районсем çак ĕçе гума халĕ те тытăнман-ха. Тĕслĕхрен, Элĕк, Йĕпрес, Калинино, Первомайски, Пăрачкав, Сĕнтĕр, Çĕрпÿ тата ытти хăшпĕр районсенче çимелли çĕрулмисен тăррисене касса хăварас ĕç уйрăмах юлса пырать. Рабочисене продуктсем парса тăракан хăшпĕр ОРС-сенче тата çĕрулми упранса выртакан подвалсенче те ку тĕлĕшпе нимĕн те туман-ха. Çĕрулмине тăррисене касса хăвармасăрах расходлаççĕ.

Çĕрулмисен тăррисене касса юлса вăрлăхлăх упрас ĕçе кирлĕ пек хакласа туса пынă çĕрте ĕç йăлгах урăхла тăрать. Н-ски заводăн ОРС-ĕ (завком председателĕ Л. Шуникова юлташ) çĕрулми тăррисене касса вăрлăхлăх хатĕрлемелли задание çĕр процентпех пурнăçланă. Шупашкарти столовăйсен тресчĕ те задание 66 процент тултарнă. Анчах республикăри колхозсем çимелли çĕрулмисен тăррисене вăрлăхлăх касса хăвармалли плана пурĕ те 11 процент çеç пурнăçланă-ха.

Çуркунне çитесси инçе юлмарĕ. Унпа пĕрле çĕрулми лартмалли вăхăт та çывхарса килет. Çимелли çĕрулмисен тăррисене касса хăварас ĕçе çине тăрса туса пырас пулать. Государство панă задание пурнăçламалла. Çак ĕçе кая хăварса пынине халех пĕтерес пулать. «Çĕрулми тăррине касса хăвармасăрах лартма çĕрулми çитет-ха» тесе лăпланса лармалла мар. Çакна шута илес пулать: пирĕн колхозсем кăçал нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсемпе облаçсенчи колхозсене çĕрулми вăрлăхĕ парса пулăшмалла.

Касса хатĕрленĕ çĕрулми тăррисене лартмалли вăхăтченех лайăх пăхса усрас пулать. Директор помощникĕ Бунин пулса ĕçлекен заводăн овощехранилищинче касса хунă çĕрулми тăррисем пăсălма пуçланă. Кунта çĕрулми тăррисене шăннă çĕрулмисенчен те касса илсе, пĕрле хутăштарса янă. Вĕсенчен вара ыттисем те пăсăлма тытăннă. Çакăн пек чухне касса хатĕрленĕ тăрăсене пăсăккисенчен çийĕнчех суйласа уйăрса хурас пулать.

Çĕршывпа фронт валли тырă, пахча-çимĕç, çĕрулми нумайрах туса парасси кашни колхозăн, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсен ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнса тăмалла. Лартмалли çĕр лаптăкне ÿстерсе, çĕрулмине пирĕн кăçал нумайрах туса илмелле. Çимелли çĕрулмисенчен халĕ тăррисене вăрлăхлăх нумайрах касса хатĕрлени пире планран иртгерсе çĕршер тонна çĕрулми туса илме май парать.

Агроном Саррэ.

91 трактористка тракторсемпе ĕçе тухма хатĕр

Елчĕк МТС-ĕ 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕнче ĕçлеме çĕнĕрен 85 тракторист вĕрентсе хатĕрлемеллеччĕ. Ялхуçалăх валли механизаторла кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе кирлĕ пек туса пынипе мартăн 1-мĕшĕ тĕлне МТС трактористсем вĕрентсе хатĕрлемелли хăйĕн курсĕнчен пурĕ 131 çынна вĕрентсе кăларчĕ. Вĕсем вĕренÿре пысăк пахалăх кăтартрĕç, трактора тĕплĕн вĕренчĕç, теорилле занятисенче пулнипе пĕрлех практикăлла занятисенче те нумай пулчĕç.

Курсран вĕренсе тухнă 131 çынран тракторпа ĕçлеме «отлично» тата лайăх вĕренсе çитнисем 88 çын, вăтам пĕлÿ илнисем 59 çын пулчĕç. Вăл шутран 98-шĕ—çамрăк хĕрарăмсемпе хĕрачасем.

Кăçал колхозсен уйхирĕсенче тракторсемпе ĕçлеме çĕнĕрен 91 трактористка тухать. Халь курсран вĕренсе тухнă трактористсем хушшинче вĕсем чи лайăххисем, пултаруллăн ĕçлеме пултараканнисем. МТС дирекцийĕ вĕсене пурне те бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Çĕнĕ трактористкăсем халь ытти трактористсемпе пĕрле ялхуçалăх машинисене юсаççĕ. Курсра илнĕ пĕлĕве ĕçре çирĕплетеççĕ.

Халĕ МТС-ăн курсĕнче 4-мĕш группа вĕренет. Курс комбайнерсен помощникĕсем тата машиноведсемпе плугарьсем пулма вĕрентет. Вăл шутра комбайнерсен помощникĕсем пулма 26 çын вĕренеççĕ.

П. ЯШИН.
Елчĕк МТС директорĕ.

ВСЕВОЛОД РОЖДЕСТВЕНСКИЙ

СМИРНОВ ПУЛЕМЕТЧИК ÇИНЧЕН ХУНĂ ЮРĂ

Аннемĕр-çĕршывăмăр, сана ыталатпăр,
Тăратрăн пире паттăрсенĕн ретне.
Манмастпăр эпир, нихăçан та манмастпăр
Смирнов пулеметчик ятне.

Фашист вăр-хурахĕ хускалчĕ хаяррăн,
Вĕлерчĕ, кăларчĕ пушар.
Смирнов пулемечĕ çунгарчĕ кăварăн,
Тăшман сапаланчĕ чăл-пар.

Тăшман чăтаймарĕ, вăл ÿкрĕ, шăртланчĕ,
Хускатрĕ хăрушă танкне.
Çич ют — ирсĕр нимĕç, каппайчăк, выç анчăк
Таптасшăн чăваш ачине.

Смирнов хăрамарĕ, пуçне вăл усмарĕ, —
Тăван çĕршыва юрататъ.
Çунтарчĕ вăл печĕ, пĕр пуля юлмарĕ...
Хăруш тимĕр кайăк шăвать...

Хаяррăн юнарĕ герой-пулеметчик,
Ун пур çумĕнче пĕр гранат.
Ана вăл кăкри çумне тытрĕ, çĕкленчĕ,
Вăл танк айнелле ыткăнать.

Аннемĕр-çĕршывăмăр, сана ыталатпăр,
Тăратрăн пире паттăрсен ретне.
Манмастпăр эпир, нихăçан та манмастпăр
Смирнов пулеметчик ятне.

Вырăсларан С. Шумков куçарнă.

УЙĂП МИШШИ.

СТАЛИНГРАД

Сталинград! Тĕнчене кисретсе янăрать
Сан яту, сан чапу, сан мухтавлă ĕçÿ.
Сталинград! Ман çĕршывăн мухтавĕ санра!
Паян кун сан ятна асăнман этем çук.

Çитрĕ çке кĕтнĕ кун! Пирĕнте çĕнтерÿ!
Сталинград! Тĕлĕнтертĕн эс çут тĕнчене.
Санăн кашни чулу, кашни утăм çĕрÿ
Асилтерĕ çынна çак манми кунсене.

Каппайса, кашкăрла выç эшкерĕсемпе
Килчĕ урнă тăшман ĕрлесе, кĕрлесе.
Килчĕ вăл, нимĕç—мур, юнлă ĕмĕтсемпе,
Ман çĕршыв тĕрекне çăмăл илĕп тесе.

Ирсĕрскер! Вăл пĕлмен пирĕн вăй-хăвата,
Хаяр вутлă çилле, вут витми чăтăма.
Ăна парăпăр-ши эпир Сталинграда?
Пирĕн-и вăй çитмест тăван çĕршĕн тăма?

Сĕмсĕрле ăнтăлан тăшман çулĕ çинче
Çĕршыв паттăрĕсем тăчĕç хурçă хÿмен.
Вилесле тăчĕ кашни хăй вырăнĕнче.
Çак тĕлтен тăшмана малалла иртермен.

Кашни вăрçнă кунта юлашки сывлăшчен,
Виличчен алăри пăшалне пăрахман.
Тамăкри пек хаяр çапăçу вуттинче
Юлашки юн тумламĕччен вăрçнă, чакман!

Пур иккен хурçăран çирĕп вăй тĕнчере!
Пур иккен вут витми вăй! Вăл—пирĕн çынсем.
Паттăрсем! Тав тăвать аслă Сталин сире.
Саламлаççĕ сире тав туса халăхсем.

Çапăçса, вилĕмпе вилĕме çĕнтерсе,
Ĕмĕр вилĕмсĕр турăр эсир хăвăра.
Сирĕн чаплă ĕçе манас çук ĕмĕрсем.
Янăрĕç ятăрсем юрăра, сăвăра.

Çĕнтерÿçĕ хула! Паттăр Сталин хули!
Пуç тайса çынсем асăнĕç ĕмĕр сана.
Пур чунран-чĕререн, анлă кăкăр туллин
Тав туса саламлатпăр паян Сталина!

Сехĕрлентĕр тăшман Хĕрлĕ Çар умĕнче!
Сехĕрлентĕр тăшман „Сталинград“ тесенех.
Чĕррĕн тухмĕ вăл пирĕн тăван çĕр çинчен.
Çав шăпа çеç кĕтет ирсĕр йытăсене!

Мускав, февраль, 1943 ç.

ЛАШАСЕНЕ ЛАЙĂХ ПĂХМАЛЛА, ЙĔРКЕЛЛĔН ТЫТКАЛАМАЛЛА

Малта пыракан колхозсенче, колхоза ертсе пырас ĕçре çирĕп çынсем, коллективлă пысăк хуçалăха ертсе пыма пултаракан руководительсем ларакан колхозсенче лашасем халĕ те пысăк чысра, вĕсене тимлĕн пăхаççĕ, хĕрхенсе тыткалаççĕ. Лашасен сывлăхне упраççĕ, вĕсен хисепне çулсерен йышлантарса пыраççĕ.

Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозах илер. Вăл пур ĕçпе те районра малта пырать. Ака тăвасси, тырпулсене пухса кĕртесси, государствăна тырă парасси тата ытти нумай ĕçсем кунта яланах вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пулса пыраççĕ. Çакă вăл пуринчен ытла лаша вăйĕпе тĕрĕс усă курнинчен, транспорт инвентарьне йĕркеллĕ тата яланах юсавлă тытнинчен килет. Кунга лашана тивĕçлипе хакласçĕ. Лашасене лайăх пăхса тимлĕн тыткалани пе вĕсем тем тери нумай ĕçе те ăнăçлăн туса пыраççĕ, лашасем вĕсен ыванмаççĕ. Мĕншĕн тесен «Марс» колхозра кашни лашан хăйĕн хăмăчĕ, йĕнерчĕкĕ, кÿлмелли хатĕрĕ пур, тата вĕсем виçеллĕ, яланах юсавлă. Кашни лашана кÿлме çуна, урапа, уйрăм гурта пур. Ыран хăш лашана мĕнле ĕçе кÿлмелли çинчен колхоз бригадисем, конюхсем кунта малтанах пĕлсе тăраççĕ. Инçе, йывăр ĕçе каймалла-и паян, е çăмăл ĕçе-и, лашасем яланах хатĕр, конюхсем вĕсене тăрантарнă, шăварнă, тасатнă, çула тухма апат хунă.

Анчах лашасем çине чунсăррăн пăхас ирсĕр йăла чылай колхозсенче халĕ те пур-ха. Тăрăм ялсоветĕнчи Дзержинский ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Кривов) лашасене питех те япăхтарса янă. Вĕсем пурте ырхан; тăрлавсăр кÿлсе хăмăт, йĕнерчĕк тивертсе суранланă. Çапла пулсан та лашасене кÿлме чарăнмаççĕ.

Колхозсенче час-часах çакна курма пулать: пысăкрах кĕлеткеллĕ лашасем çине нумайрах тиеççĕ, йывăртарах ĕçсене ĕçлеттереççĕ, анчах апатне ытти лашасемпе тан çеç параççĕ. Çавна пула чи лайăх лашасем, нумайрах ĕç тума пултаракан вăйлă лашасем (йăх валли юрăхлисем) çамрăклах ĕçе юрăхсăра тухаççĕ.

Лашасем çине чунсăррăн пăхнине тĕпренех пĕтермелле. Колхоз лашине иргĕнсе ватса çÿрекенсене халăх сучĕпе айăпламалла. «Красные Темяши» колхозăн старши конюхĕ Е. Васильев, вăрман каснă çĕре хĕрне леçме тесе, Хĕрлĕ Çар фондĕнче тăракан чи лайăх ăратлă кĕсрене кÿлсе кайнă. Çуна çине лашана çитерме талăклăх пĕр пăт сĕлĕ тата утă хунă. Анчах Васильев унта пĕр талăк мар, пилĕк талăк çÿренĕ. Угă пĕтнĕ пулсан та, лашана сĕлĕ паман. Вăрăм çулта выçăпа аптăранă лаша тавăрăнсанах вилнĕ.

Ялхуçалăхĕнчи пысăк ĕç çывăхарса килет. Çуракине туса иртгермелле. Çак ĕçĕн ăнăçлăхне, тĕпрен илсен, лашасем çирĕп пулни, вĕсен вăйĕпе тĕрĕс усă курма пĕлни татса парать. Лашасене пăхас ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçри обезличкăна пĕтермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановление кашни колхоз руководителĕн халех пĕр пăркаланмасăр пурнăçламалла.

А. Улендеев,
Елчĕк райçĕрĕç пайĕн ветврачĕ.

Ют çĕршывсенче

ИДЕН ИНДИРИ ЛАРУ-ТАРУ ÇИНЧЕН

Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатин ларăвĕнче лейбористсен фракцийĕн лидерĕ Гринвуд, палатăн пĕр-пĕр çывăхри ларăвĕнче Индири пĕтĕмĕшлĕ лару-тăру çинчен сÿтсе-явма сĕнчĕ. Общинăсен палатин лидерĕ Иден ăна ответлесе çапла каланă: хальхи вăхăтра тата Ганди апат çиме пăрахнă пирки, пренисем уçни усă мар, сиен кÿме пултарать, тенĕ. Хальхи лару-тăру аталанса пынă май правительство ăна тепĕр эрнере пăхса тухма хатĕр пулĕ, тенĕ. (ТАСС).

НИМĔÇСЕМ ФРАНЦИ ПИРИНЕЙĔН РАЙОННЕ ОККУПАЦИЛЕНĔ

ЛОНДОН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Женевăран пĕлтернĕ тăрăх, кунта нимĕçсем Франци Пиринейĕн районне 60 миля таран кĕрсе кайса оккупациленĕ, теççĕ. Германин оккупацилекен войскисемпе гестапо отрячĕсен хисепĕ 20.000 çынна çитет. Çак ĕçе Швейцарирен пĕтĕмпех татса илнĕ пекех, Францие Испанирен татса илес шутпа тунă пулĕ, теççĕ.

Çитес вăхăтра тумалли докладсемпе калаçусен ТЕМИСЕМ

1. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç çав тери вăйлăн çапăçса пырса, Хĕрлĕ Çар тăшмана çĕнтерме çирĕп никĕс хыврĕ.
2. Сталинград патĕнчи çапăçу, — вăрçăсен историйĕнчи чи вăйлă çапăçу.
3. Юлашки виçĕ уйăх хушшинче нимĕç войскисем поражени тÿснин тата Хĕрлĕ Çар ăнăçусем тунин сăлтавĕсем.
4. Хĕрлĕ Çар—гитлерла войскăсене хирĕç пĕр шеллемесĕр çапăçакан çар, нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем пусмăрланăшăн тата мăшкăлланăшăн вĕсене тавăракан çар пулса тăрать.
5. Большевиксен партийĕ—Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсене хавхалантаракан, организацилекен парти.
6. Сталин юлташ—кучухнехи чи аслă полководец, нимĕçсен фашистла войскисене çĕнтерессине организацилекен.
7. Отечественнăй вăрçăн татăклă тапхăрĕнче совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар умĕнче тăракан задачăсем.
8. Наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалсемпе боеприпассем ытлаларах парар.
9. Çуракине хатĕрленесси тата ăна иртгересси—вăрçăпа хуçалăхăн чи паха задачи пулса тăрать.
10. Тăван çĕршыва хÿтĕлекенсен çемьисене пулăшар.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ.

Фронта каякан тата унтан килекен çырусем çинчен

Пирĕн земляксенчен пĕри фронтовик В. Филимонов юлташ 1942 çулти декабрь уйăхĕнче пирĕн пата çапла çырчĕ: «Мускавра тухакан хаçатсене вуланă чухне хамăрăн республикăри рабочисемпе колхозниксем танксемпе самолетсем тума укçа пухас ĕçе мĕнле хутшăнни çинчен пĕлес килет...» Мускавра тухакан хаçатсем çинче пирĕн республика танксемпе самолетсем тума малтан 31,5 миллион тенкĕ, кайран 55 миллион тенкĕ пухни çинчен пĕлтернисем тата Сталин юлташ пирĕн республикăри ĕççыннисене саламланисем пичетленсе тухсан вара ВКП(б) Обкомне, республикăри тата районсенчи хаçатсен редакцийĕсене, предприятисене, учрежденисене тата колхозсене отечественнăй вăрçă фрончĕсенчен вуншар та çĕршер çырусем килме пуçларĕç.

Боецсемпе командирсем тата политработниксем хăйсен çырăвĕсенче республикăри ĕççыннисене Хĕрлĕ Çара ...уйăпнăшăн хĕрÿллĕн тав тăваççĕ. Сталин юлташран икĕ хут салам илме тивĕç пулнă хăйсен орденлă республикипе мухтаннине кăтартса параççĕ. Çырусенче вĕсем хăйсен çапăçури ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ тата эпир тылра мĕнле ĕçлени çинчен ыйтса пĕлеççĕ.

Гитлерăн вăрă-хурахла çарĕ ултавлăн тапăнни пирĕн мирлĕ ĕçпе лăпкă пурнăçа пăсрĕ. Вара, хамăрăн тăван çĕршыва тăшманран хÿтĕлесе хăварас тесе, çынсем фронта кайрĕç. Анчах вăрçă вут-хĕмĕнче пулнă чухне те Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем хăйсен тăван килĕ, хăйсен колхозĕ, хăйсен завочĕ, учрежденийĕ, хăйсен шкулĕ çинчен шухăшлаççĕ, земляксем мĕнле ĕçлесе пурăнни çинчен пĕлесшĕн çунаççĕ. Тĕрлĕ сăлтавсене пула хăйсен земляксенчен нумай вăхăт хушши çыру илеймесен, вĕсем тунсăхлаççĕ, кичемĕн туяççĕ. Тылран килекен çырусем вĕсене вăй кĕртеççĕ, хăватлантараççĕ.

Шăмăршă районĕнчен кайнă Шамеев юлташ темле сăлтавсене пула нумай вăхăт хушши çырусем илеймен. Ăна питĕ кичем пулнă. Вăл, ыттисем пекех, тăван республикăн, колхозăн, районăн пурнăçĕпе интересленнĕ, хăйĕн çемьипе интересленнĕ. Вара вăл çапăçура аманса тухнă хыççăн госпитальре пурăннă чухне çав ыйтусемпе парти Обкомне çыру ячĕ. Обкомран ответ илнĕ хыççăн Шамеев юлташ çийĕнчех тав туса телеграмма ячĕ. Çав çырăва илсен вăл мĕнле савăннине каласа пама та йывăр. Çавăн пек савăнать ĕнтĕ кашни боец.

Çавăнпа та «Правда» хаçатăн 1942 çулти декабрĕн 7-мĕшĕнчи умстатьи питех те тĕрĕс калать: «Фронтпа тылри земляксем çыру урлă çыхăнса тăни — пысăк ĕç. Вăл фронтрисене те, тылрисене те йывăр самантсене çĕнтерме пулăшать, вăл фронтрисене те, тылрисене те тăван çĕршывшăн, тăшмана çĕмĕрсе тăкассишĕн паттăр ĕçсем тума пулăшать».

* * *

Пирĕн земляк — бригаднăй комиссар Мистрюков юлташ политотдел начальникĕ пулса ĕçленĕ часри земляксем патне парти Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ çыру янăччĕ, вăл çырура пирĕн предприятисемпе колхозсем паттăррăн ĕçлени çинчен, рабочисемпе колхозниксем фронта пулăшма хăйсен пĕтĕм вăйне пани çинчен тата вĕсем фронтовиксенчен нимĕç оккупанчĕсене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пыма ыйтни çинчен çырнăччĕ. «Боецсем пĕлсе тăччăр, — тенĕ вăл çырура, —тыл, вĕсен тăван хулисемпе колхозĕсем тăшмана çĕмĕрсе тăкма фронтовиксене пулăшас тесе нимĕн те шеллесе тăмĕç, мĕн кирлине пурне те тăвĕç. Пирĕн кашни земляк çакна çирĕп асра тыттăр: тăван çĕршыва фашистла вăрă-хурахсенчен хÿтĕлесе хăварас, хамăрăн аттесен, аннесен, арăмсен тата юратнă ачасен пурнăçне сыхласа хăварас тесен, боецсен нимĕçсене вĕлермелле, пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пымалла; çакна тума хăйсен юнне, кирлех пулсан, пурнăçне те шеллесе тăмалла мар. Отечественнăй вăрçă геройĕсене тăван çĕршыв нихăçан та манмĕ, вĕсен ячĕсене халăх яланах асра тытĕ».

Чаçăн политотделĕ çак çырăва листовкăсенче пичетлесе кăларнă та пирĕн кашни земляка панă. Çак чаçри пирĕн земляксен пĕрлешÿллĕ пухăвĕ çав листовкăн тепĕр енне хăйсем вĕлернĕ фрицсен шутне çырса пыма йышăннă.

Вĕсем пирĕн республикăри ĕççыннисем патне тарăннăн хумханса çырнă çырăва хăй вăхăтĕнче пирĕн хаçатсем пичетлесе кăларнăччĕ. Çав çырура пирĕн 250 земляк тăван çĕршыв умĕнче, хăйсен земляксем умĕнче тупа турĕç, фашистла вăрă-хурахсене хирĕç пыракан кĕрешÿре эпир хамăрăн орденлă республикăн чысне варалямăпăр, тесе сăмах пачĕç.

«...Çак хăрушă сехетре, — тесе çырчĕç вĕсем, — эпир, орденлă Чăваш республикин ывăлĕсем, хамăрăн юратнă социализмлă тăван çĕршывăн кун-çулĕшĕн питех те ответлă пулнине туйса тăратпăр, хамăрăн юмахри пек паттăр земляк Василий Иванович Чапаев пек кĕрешме пулса тупа тăватпăр, тăван çĕршывăн приказне пурнăçа кĕртме, ылханлă тăшмана чарса лартма, каялла хăваласа яма тата çĕмĕрсе тăкма пулса тупа тăватпăр. Пирĕн алăсем çĕкленнĕ чухне, пирĕнте юн вĕресе тăнă чухне эпир тăшмана вĕçне çитиех пыра-пыра çапăпăр; вилĕпĕр, анчах хамăрăн рубежран пĕр утăм та чакмăпăр—çакăн пек пирĕн кĕрешÿри лозунг: Тăван çĕршывшăн, совет влаçĕшĕн пирĕн земляк Чапаев кĕрешнĕ пек кĕрешĕпĕр».

Çакăн хыççăн пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн земляксем хăйсем тупа тунине чыслăн пурнăçа кĕртнĕ. Вĕсем Обком çырăвне пичетленĕ листовкăн тепĕр енне çĕршер фашистсене вĕлерсе пĕтерни çинчен, тăшманăн вуншар дзочĕсемпе огневой точкисене пĕтерсе тăкни çинчен çырса хунă. Тăшмана хирĕç пынă малтанхи çапăçусенчех çак чаçри пирĕн земляксем хăйсем Хĕрлĕ Çарăн хăюллă та паттăр воинĕсем пулнине кăтартса панă. Вĕсенчен чылайĕшĕсем правительствăн пысăк наградисене — Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илме тивĕçлĕ пулнă.

Хĕрлĕ Çар воинĕсем вĕсем аслă Октябрь революцинче кĕрешсе илнĕ хăйсен чăн-чăн халăх влаçне хÿтĕленине пĕлсе тăраççĕ. Çавăн пекех тата фашистла ирсĕрсене пĕр чарăнмасăр çĕмĕрсе пынипе кăна хăйсен пурнăçĕпе ирĕклĕхне, хăйсен çемьисен тата халăхĕн пурнăçĕпе ирĕклĕхне упраса хăварма пуррине пĕлсе тăраççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Совет Союзĕнчи пур халăхсен ывăлĕсем те Отечественнăй çак аслă вăрçăн фрончĕсенче çав тери паттăррăн çапăçаççĕ. Фашистла захватчиксене хирĕç пыракан тĕрĕслĕхлĕ вăрçăра Хĕрлĕ Çар хамăр çĕршыври пур халăхсен ирĕклĕхне, никама пăхăнманлăхне, телей тивĕçлĕхне хÿтĕленине пĕлсе тăраççĕ. Хĕрлĕ Çар тĕрĕслĕхшĕн, тăван çĕршывăн чысĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçнине ăнланса илни массăллă паттăрлăхан çăлкуçĕ пулса тăрать.

Чăваш республики хăйĕн земляксемпе — Совет Союзĕн геройĕсемпе Винокуровпа, Васильевпа, Ефимовпа, Орловпа, Габайдулинпа тивĕçлипе мухтанма пултарать. Вĕсем хамăрăн легендăллă землякăн В. И. Чапаевăн тивĕçлĕ преемникĕсем пулса тăраççĕ. Республикăри ĕççыннисем хăйсен хăюллă ывăлĕ-хĕрĕсемпе — Ленинграда оборонăланă чухне паттăр вилĕмпе вилнĕ Смирновпа, çĕршер фашистла йытăсене вĕлернĕ паллă снайпер Давыдовпа, пĕр çапăçура кăна 20 фашиста вĕлернĕ Банбуринпа, Ленин орденĕпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденне илме тивĕçлĕ пулнă медсестра Гайкинăпа тата ыттисемпе те тивĕçлипе савăнаççĕ. Тăшманпа çапăçас ĕçре çавăн пек уйрăмăнах палăрнисем, правительство наградине — орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнисем, февралĕн 8-мĕш тĕлне 1.475 чăваш шутланаççĕ. Вĕсем паттăр Ленинград хулине хÿтĕленĕ çĕрте, Сталинград патĕнче тăшмана аркатса тăкнă çĕрте орденлă республикăн чысне тата мухтавне çÿллĕн тытса пычĕç; Çурçĕр тинĕсĕнчен пуçласа Хура тинĕс патне çитиех Отечественнăй аслă вăрçăн пур фрончĕсенче те вĕсем хĕрÿллĕн çапăçаççĕ.

1942 çулхи ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче парти Обкомне кăна пирĕн войскăсен пĕр-пĕринчен уйрăм тăракан 45 чаçĕсемпе соединенийĕсенчен çырусем килчĕç. Вăл чаçсемпе соединенисен боецĕсем тылри земляксемпе яланах çыру урлă çыхăнса тăрасшăн, хамăр республика епле ĕçлени çинчен вĕсем литература ыйтаççĕ.

Шупашкар хулинче 40 предприяти, учреждени тата шкул коллективĕсем войскăсен тĕрлĕ чаçĕсемпе çыхăнса тăраççĕ, вĕсене литература тата урăх посылкăсем ярса тăраççĕ, хăйсен коллективĕсен ĕçĕсем çинчен фронта тата фронтовиксен çемьисене епле пулăшни çинчен каласа параççĕ. Нумай колхозсемпе колхоз бригадисем те хăйсен земляксем патне яланах çырса тăраççĕ. Çав çырусем вĕсем фронтпа тыл тачă çыхăнса тăнине кăтартакан тĕслĕхсенчен пĕри пулса тăраççĕ, тăшманшăн хăрушă пулса тăракан никам çĕнтереймин совет патриотизмне ÿстерме пулăшаççĕ, фронтра та, тылра та паттăр ĕçсем тума пулăшаççĕ. Çавăнпа та парти, комсомол, профсоюз организацийĕсен, пичетленекен тата стена хаçат редакторĕсен задачи—предприятисемпе учрежденисен тата шкулсен коллективĕсене, колхозсемпе колхоз бригадисене фронтовиксемпе çыхăну тытма, яланах çырусем çырса тăма пур майсемпе те пулăшмалла.

Çитĕ вăхăт, ун чухне историксем тата мĕнпур çамрăксем Отечественнăй аслă вăрçăн паттăрла çулĕсене тĕпчесе вĕреннĕ çĕрте ытти документсемпе пĕрлех çав çырусен кашни йĕркинех çав тери юратса, хумханса вулĕç. Этемлĕхе чи хăрушă тăшмантан — Германи фашизмĕнчен хăтарас ĕçри совет патриотизмĕн вăйне вĕсем çав тери тарăнăн кăтартса параççĕ.

Т. АХАЗОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1265 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58. 42 п.